**КИБЕЧ**

# Аннерен хакли никам та сук

*Прозăлла сăвăсем*

Шупашкар – 2003

* * *

Ҫуралнине эпӗ астумастӑп. Анчах анне калатчӗ: ҫуралтӑн эсӗ ҫу кунӗнче, ыраш ҫӗмелӗ ҫумӗнче. Апла тӳрех кӗрсе ӳкнӗ эпӗ ҫутҫанталӑк ытамне. Сенкер кӑвак тӳпе мана хӑйпе чӗркенӗ, хӗвел шевли питӗм ҫинче сиккелесе вылянӑ, ӑшӑ ҫилӗ лӑпкӑн вӗрсе ман ҫемҫе ҫӳҫӗме типӗтнӗ, анне юррипе пӗрле кайӑк сасси хӑлхана кӗнӗ. Тен, ҫавӑнпах паян кун та килӗштеретӗп ҫутҫанталӑк юррине.

Пӳртре эпӗ выртнӑ пилӗк талӑк. Унтан каллех уя васканӑ: аннепе тырӑ вырма. Кӑчӑрт-кӑчӑрт ҫурла сасси паян кун та хӑлхара. Тен, ҫавӑнпах пуҫ таятӑп кашни кунах сар ҫӑкӑра. Тен, ҫавӑнпах ирех тӑратӑп хӗвел тухнине курса киленме. Тен, ҫавӑнпах тӑрӑшатӑп ҫутҫанталӑкпа килӗшӳллӗ пурӑнма.

* * *

Эсӗ – пур та, эсӗ ҫук та. Чи малтанах эсӗ ҫуралнӑ аҫупала аннӳшӗн, унтан – халӑхшӑн. Малтанхи санран килмест, иккӗмӗшӗ – хӑвӑнтан. Эсӗ пуррине ҫынсем курӗҫ тӑван ялшӑн, халӑхшӑн тунӑ ырӑ ӗҫсенче. Ҫакӑ пулӗ те вара ҫуралнине пӗлтерни. Ҫакӑ пулӗ те вара сана халӑх йышӑнни. Ҫав хушӑрах ав куратпӑр урӑхларах ҫынсене те. Куллен ӗҫе ҫӳреҫҫӗ, ӗҫленӗ пек тӑваҫҫӗ, укҫине те илеҫҫӗ. Анчах халӑх пурпӗрех пит йышӑнмасть вӗсене.

Пушӑ вырӑн ҫыннисем теҫҫӗ вӗсем пирки. Мӗншӗн тесен ҫав ҫынсенчен усси сахал. Мӗншӗн тесен – вӗсем иккӗмӗш хут ҫуралман.

Чӑн-чӑн ҫын вӑл яланах икӗ хутчен ҫуралать: пӗрремӗш хут – аҫу-аннӳшӗн, иккӗмӗш хут – тӑван халӑхшӑн.

* * *

Анне мана каларӗ: юратмасӑр пӗр-пӗрне, хӗрӗм, качча ан тух терӗ. Итлемерӗм, качча тухрӑм, хам туйӑма шантӑм. Хам юратсан пурте пулӗ, шутларӑм эпӗ ун чухне. Чӑнах пулчӗ, пурте ӑнчӗ: пурлӑх енчен, кил-ҫуртран; курорта та хӑнана ҫӳретпӗр халь машинӑпа, ятӑм та пур, чысӑм та. Анчах темшӗн

пурпĕрех тем ҫитмест пек пурнăҫра, темшĕн пушă ăшăмра, хам таврара мĕн пурри савăнăҫ кӳмест мана. Пĕтĕм ылтăн-кĕмĕле, яппун телевизорне тухса пеме эпĕ хатĕр – пултăрччĕ кăна пĕрле хĕмленсе тăран кăмăллă чĕре.

* * *

Чылай вăхăт иртсессĕн, пĕр ӳсĕмри ентешсем тĕл пултăмăр хăнара. Пĕрне-пĕри пӳле-пӳле пуҫларăмăр пуплеме.

Пĕри калать, хăй савăнать: туянтăм тет хура тĕслĕ ҫĕн машина, гаражне те, чирлĕ тесе хут тупса, лартрăм тет кил-картинех.

Тепри калать, эх, савăнать: тупнă иккен ăшă вырăн, кир-лисемпе туслă пулса  пурăнать иккен вăл халăх вăйĕпе ырă курса.

Виҫҫĕмĕшĕн савăнăҫĕ – тăвати пӳлĕмлĕ хваттер. Ялта пурă-накан ватă ашшĕне ҫырнă иккен хăй ҫумне. Ашшĕ пурăнас пӳлĕмре халь усрать ав йыттине.

Черет ҫитрĕ ак мана. Мĕн калăп-ши вĕсене? «Эп паян та савăнсах ҫирĕм анне яшкине. Унран пахи, унран тутли маншăн ҫук та тĕнчере», – терĕм хайхи кусене. Кăн! пăхрĕҫ тусăмсем, шарламарĕҫ нимĕн те. Мĕн каласшăн пулчĕҫ-ши? Хаклă тусăм, итлекенĕм, эсĕ мĕскер шутлан-ши?

* * *

Мĕн ĕлĕкрен-авалтан ача ӳснĕ ватăлăхпа юнашар. Ҫакă пулнă та ĕнтĕ ҫынлăха вĕрентесси. Ҫавăнтан пуҫланнă та пĕр-пĕрне хисеплесси, ваттисене чысласси.

Паян пачах урăхла. Ачасемпе юнашар ваттисем ытла сахал. Аслашшĕсĕр ӳсеҫҫĕ, кукамăшне курмаҫҫĕ. Илейместпĕр тав-ҫăрса ҫак йăла сиенлĕхне. Пĕр сиенĕ – ачасемшĕн, тепри вара – хамăршăн. Ăҫта курччăр-ха вĕсем виҫĕ сыпăк пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл пурăннине? Ăҫтан пĕлччĕр-ха вĕсем ывăнса ҫитнĕ ватă чĕресене пулăшу парса пымаллине? Хамăр ватлăх сумлă пултăр тесен, атте-аннесемпех пĕрле пурăнасчĕ; ачасене ватăлăха кăтартса ӳстересчĕ.

* * *

Тантăшăм, сан ҫинчен каласнă чух аҫу ятне питех асăн-маҫҫĕ, чĕннĕ чухне те ытларах Марье Мишши тееҫҫĕ. Теле-йĕмĕр ҫапла пулчĕ – аттесĕрех ӳсрĕмĕр, йывăрлăхне тӳсрĕмĕр.

Анне пулчĕ пирĕншĕн шăпах атте вырăнне, анне пулчĕ пирĕншĕн хăш чух пичче вырăнне, анне пулчĕ пирĕншĕн аслă аппа вырăнне. Суха тытма, каскалама, юлташсемпе туслă пулма, хамăр чыса мĕн пĕчĕкрен упрама пире анне вĕрентрĕ, вăйне пачĕ, чунне пачĕ, ятне пачĕ вăл пире. Анне ăшши – хевтере, упрар ăна чĕрере. Амăшĕ пур çын – тăлăх мар. Тусăм, эсĕ ан кулян Марье Мишши тенишĕн.

* * *

Анне пире темле уйрăм туйăмпа юратать. Сывлăхлă-и, айван-и, сăнран кăштах начар-и – анне пурпĕр юратать.

Арăм пире юратать хăйне чапа хунишĕн, куллен лайăх пăхнишĕн, вăй хурса ĕçлесе пурлăх туса панишĕн. Ырлăхĕ кăшт чаксанах юратăвĕ те чакать.

Анне пире юратать пĕтĕмĕшле хак парса. Арăм пире юратать мĕншĕн те пулин кăна, уйрăм ене суйласа. Юраттăрччĕ вăл анне пек, кĕтсе илĕттĕм çакна çурхи çутă хĕвел пек.

* * *

Ачаран асра юлни яланах пуçра, чул çине çырса хунипе пĕр тан.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн аннесем атте вырăнне, лаша вырăнне пулнă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ, кану мĕнне пĕлмен. Çит-меннине тата патшалăхĕ налукпа чуна илнĕ. Вăхăтра парса татма-сан киле пырса тустарнă, хаклă япаласене туртса илсе кайнă.

Алхасатчĕç ун чухне налук пуçтаракансем. Хирĕç калакан-сене хăрататчĕç тĕрмепе.

Анчах ватă асанне пурпĕр тупрĕ хăюлăх, калассине каларĕ:

– Пурнăçу сан ан ăнтăр, мăрьерен тĕтĕм тухма пăрахтăр, кил хушшине вĕлтрен пустăр, çурт тăррине мăян шăттăр, – терĕ.

Те шăпи çапла пулчĕ, те асанне ылханĕ çитрĕ – çав çын эрех ăшне путса вилчĕ, ачисем те халăха юрăхлă ĕçченсем пулаймарĕç, пурнăçне тĕрмерен тĕрмене çӳресех ирттерчĕç, ашшĕ килне вĕлтрен пусрĕ.

Ватă çын ылханĕ чăнах та çитет пуль.

* * *

Хĕрарăмăн хитрелĕхĕ ялан пĕр пек курăнмасть – хăш чух пачах чакса пырать, хăш чух йăлкăшса каять. Хĕрарăм пурнăçĕнче

ун илемне пур енлӗ уҫса паракан самант пур. Ҫавӑ – арӑм ача ҫуратмалли ҫуртран пӗчӗкҫӗ пепкепе киле пырса кӗнӗ кун.

Арӑм питӗнче ун чух ҫиҫет ҫепӗҫ илемлӗх, ӑшӑ кӑмӑлпа, мамӑк евӗр ҫемҫе алӑпа тытать манӑн телее, ман юрату тӗшшине, тин кун курнӑ ывӑла.

Утти акӑш ишнӗ пек, чӗлхи чӗкеҫ чӗлхи пек. Арӑм вара, чӑнах та, ҫӗнелсе тухнӑн туйӑнать. Ҫавӑнпа та ҫак илемлӗ вӑхӑта тӑтӑшах курас килет.

* * *

Тӑван халӑхӑм, юратнӑ аннем, эпӗ сан вӗри юнун пӗр пӗчӗк тумламӗ. Санра пурри манра пур: хӑравҫӑлӑх та чылай, ыттисене шанманни те, чӑваш пулнишӗн вӑтанасси те, хама уйрӑммӑнрах тытасси те...

Ҫак йӑласем сыпран-сыппа тӑсӑлса пыраҫҫӗ. Япӑххисенчен тасалса пӗтме пит ҫӑмӑлах мар иккен. Ӑҫтан ҫӑмӑл пултӑр ӗнтӗ: пӗр ҫӗре чӑмӑртанса, пӗр халӑх пулса пурӑнса курай-марӑмӑр. Сапса янӑ пӑрҫа пек сапаланса пӗтрӗмӗр. Тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗн-тӗрлӗн шӑта-шӑта тухрӑмӑр, анчах тӑван халӑх ӑшши ҫителӗксӗр пулнӑран имшертерех ӳсрӗмӗр. Пӗрлӗх ҫукки пӗтерет. Хӑҫан та пулсан пӗрле пухӑнса, вӑйӑ картине тӑрса, алран алла тытӑнса харӑс юрласа пулӗ-ши?

* * *

Ҫынна кун-ҫул парнелесси, ача-пӑчана сывлӑхлӑ пӑхса ӳстересси, кил-ҫуртри тирпейлӗхе, ҫемьери килӗшӳлӗхе упрасси пӗтӗмпех хӗрарӑмран килет.

Ахальтен мар авалхи скульпторсем чи малтан ача амӑшне сӑнлама тӑрӑшнӑ, унтан тин турӑ кӗлеткине тума тытӑннӑ. Ун чух хӗрарӑм турӑран та ҫӳлерех тӑнӑ иккен.

Халӗ вара хӗрарӑм кӑштах йӳнелчӗ. Пӗрисем пукане вырӑнне кӑна хураҫҫӗ. Хӗрарӑм ҫамрӑк та илемлӗ чухне вы-ляҫҫӗ-выляҫҫӗ те пӑрахаҫҫӗ.

Теприсем хӗрарӑма нумай ӗҫленӗшӗн килӗштереҫҫӗ, парнесем, орденсем парса хавхалантараҫҫӗ. Арҫын вырӑнне лава кӳлӗнсе ҫемьене малалла туртакансен шучӗ ӳссех пырать. Илемлӗхпе ҫепӗҫлӗх чаксах пырать.

Хӗрарӑма юратупа ӑшӑтса, ӗҫпе пулӑшса, кулленхи пурнӑҫне ҫӑмӑллатма тӑрӑшакансем те пур. Анчах ҫакна тума пит ҫӑмӑлах мар иккен. Пурлӑх шайӗнче те, ӗҫ йӗркисенче те хӗрарӑма хирӗҫли питӗ нумай.

Ҫук-ха, хӗрарӑм пурнӑҫри чӑн-чӑн вырӑнне шыраса тупайман халлӗхе.

* * *

Ача чухне айван пулнӑ. Анне пач ҫывӑрмасӑрах пурӑнать пуль тесе шутлаттӑмччӗ. Сӑлтавӗ пулнах ҫав. Эпӗ ирпе куҫа уҫнӑ чух кил-ҫуртра тирпейлӗх, сӗтел ҫинче апат-ҫимӗҫ. Эп ҫывӑрма выртнӑ чухне анне алӗҫ тӑватчӗ.

Мӗнле ҫав тери чӑтӑмлӑ пулнӑ-ха эсир, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи аннесем? Ялан ӗҫре, шӑм-шак канмалӑх ҫывӑрса та курай-марӑр пуль. Тӗкӗр ҫине пӑхса илме те вӑхӑт пулман сирӗн.

Анне ҫывӑрнине эп астумастӑп.

* * *

Лаша пуласси – тихаран паллӑ, ҫын пуласси – ачаран тенӗ ӗлӗк ваттисем. Анчах ҫакна манас марччӗ – ача пек айванни, ҫын пек вӑрах ӳсекенни урӑх нимле чӗрчун та ҫук. Ачана кулленхи пулӑшу кирлӗ.

Ҫуралакансем нумай, чӑн-чӑн Ҫын шутне кӗрекенсем сахалтарах. Пурнӑҫа тӗрмере е ӑсран катӑккисен ҫуртӗнче пурӑнса ирттерекенсем те чылай.

Ачасене ҫӑвартан апат хыптарса тӑни ҫеҫ ҫителӗксӗр. Капӑр ҫи-пуҫ та нимех те мар. Ытларах ырӑ туйӑмпа ҫынлӑх кирлӗ. Ачана пӗчӗклех ашшӗ-амӑшӗнчен уйӑрас марччӗ, чӗрҫи ҫинче вылятса, юрату ӑшшипе кӑмӑлне пуянлатса ӳстересчӗ.

Хамӑр ватӑлӑх ачамӑрсен ҫынлӑхӗнче. Апла пулсан тӑрӑ-шар, ачалӑха пулӑшар.

* * *

Каснӑ чӗлле тепӗр хут ҫыпӑҫтарма питӗ хӗн. Ҫемьере те ҫавах. Килӗшӳлӗх пӗтсен, пӗрне-пӗри ӑнланми пулсан, ҫемье кӗҫех арканса каять. Тем чухлӗ вӑй хурсан та, кӑштах юсасан та малтанхине ҫитес ҫук.

Ҫемьери йӗркесене сыхласа тытса пыраканӗ пулмалла. Ҫакна эпӗ анне вилсен тин тавҫӑрса илтӗм. Вӑл пур чух пурте йӗркеллӗччӗ. Ҫемьере тӑван чӗлхе те, чӑвашлӑх та пурччӗ. Халӗ вара урӑхла. Темшӗн хама ют ҫын пек туйма пуҫларӑм. Ачамсем те хамӑнах, анчах вӗсенче чӑвашлӑх сахал. Арӑм та ҫавах, анчах ун пуҫӗнче ҫӑмӑлттай та чӑрсӑр хӗрарӑмсен шухӑшӗ йышланса пыни куҫкӗрет.

Паллах, кунта хирĕçӳ пур. Канăç памасть вăл мана. Мĕншĕн çапла пулчĕ-ши, ăçта йăнăш турăм-ши? Мĕншĕн ачамсенче чăвашлăх вăй илеймест-ши? Тен, хула пурнăçĕ çапларах? Тен, хула вăл чăвашлăха аркатса пыракан вырăн кăна? Чăваш ен хулисем уйрăм çĕршыв пек курăнса тăмаççĕ-и-ха?

* * *

Христос пек пулар мар, хамăра аннемĕрсенчен мала хурар мар. Атте-аннене вĕрентсе, вĕсене урăхлантарма пикенсе вăя пĕтерер мар. Вĕсем пур-пĕрех пирĕн пек шухăшлас çук, хăйсене пирĕн пек тыткалас çук. Пурнăç виçи те вĕсен самай урăхла.

Атте-аннемĕре хамăр çулпа утманшăн кӳренер мар, вĕсене ятласа кăмăлне хуçар мар. Ытларах вĕсем каланине итлер. Тен, тĕрĕслĕх вĕсенчех. Ватлăхра çамрăксемшĕн усăлли пурах ĕнтĕ.

* * *

Атте-аннесĕр çакă çутă тĕнчере эпир пулас çук, пĕрне-пĕри курса савăнас та çук.

Шутлатăп та тĕлĕнетĕп: мансăрăн, хаклă тусăмсем, эсир мĕнлерех пурăнаттăр-ши? Йывăр самантра е нимере сире кам пулăшĕ, ĕçкĕ-çикĕре кам юррине итлĕр-ши?

Эпĕ пурри хамшăн çеç мар ĕнтĕ. Тавах атте-аннене. Вĕсен умĕнчи парăма нихăçан тавăрса пĕтерес çук.

Шел, хуланалла вырнаçнă хыççăн ашшĕ-амăшĕ çине урăхларах пăхакан та пур. Ваттисем çи-пуçран чаплах марришĕн, вырăсла начар калаçнишĕн вăтанакан та тĕл пулать. Шупашкара килнĕ ашшĕ-амăшĕпе юнашар мăнаçлăн утма именекен нихăçан та пархатар курас çук.